Тăвай районĕн хаçачĕ

# ЯЛ ĔÇЧЕНĔ

1935 çулхи
февралĕн 17-мĕшĕнче
тухма пуçланă

• 2025 çул •

Утă (июль), 4

• ЭРНЕКУН •

26/10766/№

Хакĕ ирĕклĕ

## Потребительсен кооперацийĕн хисеплĕ ĕçченĕсем тата ветеранĕсем!

**Сире професси уявĕпе –**
**Пĕтĕм тĕнчери коопераци кунĕпе саламлатăп!**

«Тăвай кооперативĕ» потребобществăн нумай енлĕ ĕçĕ-хĕлĕ округ экономикишĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Сирĕн коллективра тăрăшакансен тӳрĕ кăмăлĕпе пурнăçлакан ĕçсене пула социаллă пурнăçпа экономикăн витĕмлĕ тĕллевĕсем, халăха таварсемпе, пулăшу ĕçĕсемпе тивĕçтерсе пырасси, ял хуçалăх продукцийĕпе чĕр таварне сутасси тата вырнаçтарасси, ял çĕрĕнче хушма ĕç вырăнĕсемпе тивĕçтересси йĕркеллĕн пурнăçланаççĕ.

Паян потребкоопераци ялти инфратытăма аталантарма пулăшакан инновациллĕ проектсене ĕçе кĕртсе пырать. Тивĕçтерӳ сферинче ку чухнехи технологисене ĕçе кĕртсе, ял хуçалăхне аталанма лайăх майсем туса паратпăр.

Пурнăçа кооперацие халалланисене, чуна парса ĕçлекенсене, ветерансене çирĕп сывлăх, телей, тăнăçлăх сунатăп.

**Олег ЛОМОНОСОВ,**
**Тăвай муниципалитет округĕн пуçлăхĕ**

## Потребкоопераци ĕçченĕсем, хисеплĕ ветеранĕсем!

**Сире професси уявĕпе – Пĕтĕм тĕнчери потребительсен кооперацийĕн кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлатăп.**



Эсир çĕршывăн тата округ пурнăçĕн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне курăмлă тӳпе хыватăр. Чăвашпотребсоюзĕ Раççейри потребительсен союзĕсен малти ретĕнче тăрать. Аталанăвăн çĕнĕ майĕсене, инноваци проекчĕсене ĕçе кĕртсе пынипе округри кооператорсем иртнĕ çулхи ĕç кăтартăвĕсемпе виççĕмĕш вырăна тивĕçнĕ. Пысăк çитĕнӳ çакă пĕтĕм округшăн та.

Пирĕн лавккасем ял çыннисене куллен кирлĕ таварсемпе тивĕçтерессине тĕп вырăна хураççĕ. Хамăр патăрта туса кăларакан апат-çимĕç продукчĕсене хапăл туса туянать халăх. Кӳршĕллĕ округсенчи ялсене те ăсанать вăл. Хатĕрлев çавrăнăшĕ те ӳссе пырать. Муниципалитетри шкулсенче ачасен апатланăвне ăнăçлă йĕркелеме май килчĕ.

Сире çирĕп сывлăх, ырлăхпа телей, иксĕлми вăй-хал, çемьере татулăх сунатăп.

**Роза НИКОЛАЕВА, «Тăвайри кооператив» потребобщество канашĕн председателĕ**

## «Тăвай кооперативĕ» потребобществăн маттур ĕçченĕсемпе хисеплĕ ветеранĕсене Пĕтĕм тĕнчери коопераци кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлатпăр!

Сирĕн ĕçĕр-хĕлĕр Тăвай округĕн пурнăçĕпе унăн аталанăвĕнче питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çынсен кулленхи ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерме тăрăшнисĕр пуçне эсир пулăшу ĕçĕсен майĕсемпе пахалăхне те анлăлатса-лайăхлатса пыратăр. Эсир халăх хушшинче «Ял ĕçченĕ» хаçата сарас тĕлĕшпе те нумай тимлетĕр. Тавтапуç сире пирĕнпе ĕçлĕ те туслă çыхăнура пулнăшăн. Ырă та пархатарлă ĕçĕршĕн тав туса сире тата та пысăкрах çитĕнӳсем тума çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, çемйĕрсенче килĕшӳпе тăнăçлăх сунатпăр.

**«Ял ĕçченĕ» хаçат редакцийĕн коллективĕ**

ВĂРĂМ ТА ХАСТАР ĔМĔР

НАЦИОНАЛЬНЫЕ ПРОЕКТЫ РОССИИ

## 100 çулхи юбилейĕпе

**Тăвай тăрăхĕнче пĕр ĕмĕр урлă каçнă сумлă ватăсем хушшинче – Тĕмерти Юлия Ивановна Чумышева, Лачкассинчи Анна Тихоновна Тихонова, Элпуçĕнчи Агафия Ильинична Алексеева. Виçĕмкун Сăхăтпуçĕнчи Анна Алексеевна Наумова та хушăнчĕ çак хисеплĕ йыша.**



«Паян Тăвай округĕнче хăйне евĕр кун – Сăхăтпуçĕнче пурăнакан Анна Алексеевна Наумова 100 çул тултарчĕ. Çирĕп сывлăх, телей, çывăх çынсен ăшшипе вăрăм кун-çул сире, хисеплĕ Анна Алексеевна!» – тесе çырчĕ июлĕн 2-мĕшĕнче муниципалитет округĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов хăйĕн телеграм каналĕнче. Сумлă юбиляра килне кайса саламланă май, Олег Анатольевич ăна Раççей Президентĕнчен Владимир Путинран ăшă тав сăмахĕсемлĕ открыткăна панă. Çавăн пекех юбилей саламне кӳршĕллĕ Вăрмар округĕнчи Кĕтеснер ялĕнче пурăнакан А.А.Наумовапа йĕкĕреш Мария Алексеевна патне те çитерне.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орден кавалерне Тушкил территори уйрăмĕн начальникĕ Александр Трофимов, çывăх çыннисем, ял-йыш ăшă сăмахсем каласа, тав туса ырă суннă, парнесемпе савăнтарнă.

«Вăрăм ĕмĕр вăрттăнлăхĕ – пурнăçа юратнинче, çынсене ырă суннинче, пĕр-пĕрне ăнланса, пулăшса пурăннинче»,– тенĕ хисеплĕ ватă уява пухăннисене тав туса. Унăн пуянлăхĕ – ачисем, 18 мăнукĕ, 24 кĕçĕн мăнукĕ, 1 мăн мăнукĕ.

**Раиса ШУМОВА**

*(А.А.Наумован кун-çулĕ çинчен тĕпленрех 2-мĕш стр.)*

## Тутлă апачĕпе те, ăшă кăмăлĕпе те

**«Татах килĕр, ырă сунса кĕтетпĕр»,– тесе ăсатаççĕ «Тăвайри кооператив» потребобществăн «Дружба» кафери Т.П.Соколовапа Р.В.Николаева поварсем апат çиме пыракансене.**

**«Тутлă апачĕсĕр пуçне, ăшă кăмăл-туйăмĕпе те хăйсем патне туртаççĕ»,– теççĕ тăтăшах кунта апатланма çӳрекенсем.**



Татьяна Петровна – ĕç стажĕпе аслăраххи. Кармал хĕрĕ Шупашкарти кооператив техникумĕнче вĕренсе специальноç илнĕ. 2001 çултанпах тивĕçтерӳ сферинче. Раиса Васильевна поварпа пĕр-пĕрне çур сăмахранах ăнланаççĕ. Апат пахалăхне малти вырăна хураççĕ.

Раиса Николаева – кӳршĕллĕ Канаш тăрăхĕнчен. Вунă çул ытла обществăлла апатлану тытăмĕнче, чун-чĕре туртнипе суйланă çак профессие.

Валентина Валериановна Кузьмина савăт-сапа çăваканăн ĕçĕпе кăмăллă вĕсем. Туслă коллектива çынсен шухăш-кăмăлне, сĕнĕвĕсене шута илсе ĕçлени те куллен пулăшса пырать.

**Раиса ШУМОВА**

## РЕСПУБЛИКĂРА, ОКРУГРА

• Иртнĕ эрне вĕçĕнче Шупашкарти экономика форумĕ уçăлнă. Ку вăл шучĕпе 15-мĕш форум. Республика Пуçлăхĕ Олег Николаев хутшăннипе «Раççей регионĕсен тулашри экономика çыхăнăвĕсен трансформацийĕ: çĕнĕ горизонтсем» темăпа çавра сĕтел иртнĕ.

• РФ Президенчĕ Владимир Путин Чăваш Енре пурăнакан нумай ачаллă Надежда Цветковăна «Вилĕмрен çăлнăшăн» медальпе наградăлама йышăну тунă. Вăл икĕ çынна Атăлта путса вилесрен çăлнă. Медале паттăр хĕрарăма Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев панă.

• Чăваш Енри росгвардеецсем ятарлă çар операцийĕ валли 12 сунар пăшалĕ тата 1,5 пин патрон панă. Тăшман дронсене çӳллех мар вырăнсенчен ярать иккен. Вĕсене тĕп тума яка кĕпçеллĕ пăшалсем пулăшаççĕ. Сăмах май, кунашкал пулăшупа маларах та тивĕçтернĕ: çултаläк пуçланнăранпа Чăваш Енрен фронта 200 ытла сунар пăшалĕ тата 4 пин патрон ăсатнă.

• Виçĕмçул «Ял ĕçченĕ» хаçатра пĕр страница, кăçал вара «Хыпар» хаçатăн 46-мĕш номерĕнче» «Кузнецовсен пахчи савăнтарать» ятпа Александр Валерьяновичпа Надежда Михайловна Кузнецовсем вунпĕрмĕш çул ĕнтĕ Тăвай округĕнчи хăйсемшĕн тăван Тăрмăш ялĕн уйĕнче тухăçлă çĕр çырли – виктори туса илни çинчен çырса кăтартнă. Çĕр лаптăкĕ пĕтĕмпе 3 гектар пулсан, 1 гектарне сутлăх сĕтеклĕ çĕр çырли йышăнать, вун-вун тĕрлĕ сорт ӳстереççĕ Кузнецовсем.

• Етĕрнере çамрăк ӳнерçĕсем К.Маркс урамĕнчи 95-мĕш çурт фасачĕ çине Совет Союзĕн Геройĕн Федот Орлов летчикăн портретне ӳкернĕ. Федот Никитич иртнĕ ĕмĕрхи утмăлмĕш çулсен варринче пирĕн районти Чутейри вăрман уçланкинче иртнĕ пионерсен слетне те хутшăннăччĕ, хăйĕн паттăрлăхĕ çинчен каласа кăтартнăччĕ, кашнине Ылтăн Çăлтăр медальне, ятне çырса асăнмалăх панă ылтăн сехетне тыттарса кăтартнăччĕ. Хăйне пионер галстукĕ çыхса янăччĕ.

• Республика кунĕнче Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче «Эпĕ – хĕрарăм» конкурсра мала тухнисене чысланă. 5 çул хушшинче унта Чăваш Енри тата Раççейĕн 11 регионĕнчи 5 пине яхăн хĕр-хĕрарăм хутшăннă. Кăçал кăна Чăваш, Пушкăрт, Тутар республикисенчен, Тюмень, Чĕмпĕр, Оренбург, Мурманск облаçĕсенчен пурĕ 2187 заявка килнĕ. Конкурса тăхăр вунă çултан иртнĕ тата 100 çулти ватăсем те хутшăннă. Хаçатра пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ, Тăвай муниципалитетĕнчен округ администрацийĕн ертсе пыракан специалист-эксперчĕ Юлия Хайдукова «Эпир 21-мĕш ĕмĕр çамрăкĕсем» номинацире гран-прие тивĕçнĕ.

**Иван ГЛАДКОВ хатĕрленĕ**



## Хисеплĕ вулакансем!

**«Ял ĕçченĕ» хаçата 2025 çулхи иккĕмĕш çур çулшăн çырăнтарасси малалла пырать.**
**Ăна почта çыхăнăвĕн уйрăмĕсем урлă 5 уйăхлăха илсе тăмашкăн 563 тенкĕ те 30 пус тӳлемелле. Альтернативлă йĕркепе редакцие килсе е кооператорсен магазинĕсем урлă çур çуллăха çырăнмалли хак – 360 тенкĕ.**

# Пĕр ĕмĕре çитни – пĕлтерĕшлĕ пулăм

**Анна Алексеевна Наумовапа Мария Алексеевна Казанцева – йĕкĕреш хĕрсем 1925 çулхи июлĕн 2-мĕшĕнче Вăрмар районĕнчи Кĕтеснер ялĕнче çуралса ӳснĕ.**

**Вăрçă хыççăн Анна Алексеевна Сăхăтпуçне Владимир Наумова качча килнĕ. Вĕсем 7 ача – виçĕ хĕр те тăватă ывăл – çуратса ӳстернĕ. Анна аппа халĕ Елизавета хĕрĕн çемйипе пĕрле пурăнать.**

Пĕр кунтах унпа пĕртăван Мария Алексеевна та 100 çул тултарчĕ. Мария аппа хĕрĕн, Сăхăтпуç кинĕн, çемйипе пурăнать.

Вĕсен ачалăхĕ çăмăл пулман, çамрăклах политика репрессийĕсенчен сăлтавсăр шар курнă ашшĕ хӳттисĕр тăрса юлнă. Мĕн пĕчĕкрен аллисенчен ĕç кайман, çамрăклах ял хуçалăх ĕçĕнче вăй хунă.

Анна Алексеевна 1941 çулта бригадирсен 4 уйăхлăх курсне пĕтернĕ. 1941 çултан пуçласа 1946 çулччен Иваново облаçĕнче сивĕ шурлăхсенче нумай торф кăларнă, сывлăхне хавшатнă. «Ĕç условийĕсем япăхчĕ, таса марччĕ, йывăрччĕ. Çуркуннерен пуçласа хура кĕркуннеччен, ир тăрса тĕттĕмлениччен, çыпăçакан сивĕ шĕвекре ĕçлеттĕмĕр. Ĕç хатĕрĕсенчен – кĕреçепе тачкăсемччĕ. Пире 700-шер грамм ыраш çăкăрĕ паратчĕç»,– аса илсе каласа парать Анна аппа мăнукĕсене. Çапла çамрăклах мĕн чухлĕ йывăрлăх тӳсмен-ши вăл?! Ун чухнех туптаннă унăн çирĕп кăмăлĕпе çине тăраслăхĕ. Качча тухсан хăйĕн пĕтĕм пурнăçне Сăхăтпуç ялĕпе çыхăнтарнă.

Колхозра малтанлăха чăх-чĕп, кайран пăру пăхакан пулса нумай çул ĕçленĕ. 1972 çулта Анна Алексеевнана районти «Хисеп кĕнекине» кĕртнĕ, «Хисеплĕ колхозник» ят панă.

Пенси вăхăчĕ çитсен те 1976–1982 çулсенче уй-хир бригадин бригадирĕнче тăрăшнă вăл. Ударлă ĕçшĕн Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденне, Тăван çĕршывăн 1941–1945 çулсенчи Аслă Аттелĕх вăрçи вăхăтĕнче хастар ĕçленĕшĕн, В.И.Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнине халалланă медале, Хисеплĕ паллăсене, Дипломсемпе Тав çырăвĕсене тата ытти наградăсене тивĕçнĕ. Икĕ хутчен ял канашĕн депутатне суйланă ăна. Нумаях пулмасть Анна Наумована Аслă Çĕнтерĕвĕн 80 çулхи юбилейĕ ячĕпе кăларнă медаль парса чысланă.

Инкекĕ-синкекĕ те çителĕклех пулнă ветеранăн пурнăçĕнче. Шел, упăшкипе ывăлĕ пурнăçран вăхăтсăр уйрăлса кайнă. Апла пулин те хастар Анна аппа çирĕппĕн малалла ăнтăлнă, кăмăл-сипетне упранă, çавăнпах та пуль ăс-хакăлĕ паян та çирĕп.

Ĕçченлĕхĕпе кăна мар, сăпайлăхĕпе, кăмăл пуянлăхĕпе, ăшпиллĕхĕпе, йывăрлăхра пулăшма хатĕррипе те палăрса тăрать. Мал ĕмĕтлĕ, пуçаруллă, общество ĕçĕнче те харсăр хĕрарăм хăй вăхăтĕнче хăйĕн илемлĕ те уçă сассипе ĕлĕкхи чăваш юррисене çынсем патне çитерсе мĕн чухлĕ савăнтармарĕ-ши? Паянхи кун та астăваççĕ пулĕ унăн салтак юррисене.

Сăхăтпуç шкулĕнче те яланах кĕтнĕ хăна пулнă сумлă тыл ĕçченĕ. Ăна тăтăшах тĕлпулăва чĕннĕ. Вăл çамрăк ăрăва ĕçпе тата патриотизмла, халăх йăли-йĕркине упраса хăварас енĕпе воспитани парас ĕçре пысăк тӳпе хывнине палăртма кăмăллă.

Анна Алексеевна кĕнекепе, хаçат-журналпа яланах туслă пулнă. Халĕ те «Ял ĕçченĕ» хаçата куçлăхсăрах вулама тăрăшать. «Савăк кăмăлпа пĕр ĕмĕре çитнине кĕтсе илсе ял историйĕн страницине ырă самантпа пуянлатрĕ пирĕн Анна аппа»,– теççĕ ял çыннисем кăмăлтан.

**Людмила ВАЛЕРИАНОВА**



ЫРАН – ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ КООПЕРАЦИ КУНĔ

# Хăйсен тӳпине хываççĕ

**Пĕтĕм тĕнчери кооперации тытăмне «Тăвай кооперативĕ» потребитель пĕрлешĕвĕн ĕçченĕсем те хăйсен сумлă тӳпине хываççĕ. 25 лавкка тивĕçтерет округри ялсенчи халăха. Чылай ялта альтернативлă суту-илӳ точкисем пулсан та, кооператив лавккисене халăх шанать, вĕсене çынсем кĕрсех тăраççĕ, нумай чухне тулли кăмăлпа тухаççĕ, паха таваршăн тав тăваççĕ. Çуккине те, заказ парсан, унпа кĕске хушăрах тивĕçтерессе пĕлеççĕ.**

– Кăçалхи ултă уйăхра та «Тăвай кооперативĕн» вак суту-илӳ çаврăнăшĕн тӳпи 133 миллион тенкĕпе танлашрĕ, ӳсĕм иртнĕ çулхи ку тапхăртинчен 6,8 процент пулчĕ,– паллаштарчĕ хăш-пĕр цифрăсемпе правлени председателĕ Лилия Васильевна Михайлова.

Кооператив пĕрлешĕвĕн куллен кирлĕ таварсемпе суту-илӳ тăвакан Тăвайри лавккисен алăкĕсем кун каçа самантлăха та хупă тăмаççĕ. Тĕпрен илсен, çиччĕрен саккăрччен ĕçлеççĕ вĕсем. Халăх хăнăхнă, кăмăлласах çӳрет вĕсене. Лилия Васильевна Тăвайри куллен кирлĕ таварсемпе сутă тăвакан пĕрремĕш, иккĕмĕш номерлĕ лавккасем (заведующийĕсем Алена Ларионова, Юлия Лобурева), Çĕнĕ Пуянкассинчи (заведующийĕ Ирина Журавлева), Чутейри (Надежда Алексеева), Тенеялĕнчи (Эльвира Ахтямова), Чӳкçырминчи (Инна Гаврилова), Енĕш Нăрвашри (Людмила Васильева) тата çавăн пекех Йăнтăрчăри, Тĕмерти, Çăлпуçĕнчи, Вăтаялĕнчи, Кармалти, Тушкилти лавккасем халăха туллин тивĕçтерме тăрăшнине асăнчĕ.

Кооператив пĕрлешĕвĕн лавккисем урлă халĕ пур тĕрлĕ тавара та тупса туянма пулнине палăртаççĕ çынсем. Ку чухнехи строительство материалĕсем таранах. Çакăнсăр пуçне вĕсенче вырăнта хатĕрленĕ апат-çимĕç те чылай. Хăшĕ-пĕри ятарласах вĕсене туянма васкать. Пытармастăп, хам та Тăвайри çăкăр завочĕ (директорĕ тата шăпах пирĕн ялта çуралса ӳснĕ Татьяна Витальевна Обаськина) кăларса хатĕрленĕ çăкăр-булкăпа сушкăна, кондитер çимĕçĕсемпе кукăль-макăльне кăмăлласах туянатăп. Вĕсене Тăвай центрĕнчи лавккасене кăна мар, ялтисене тивĕçтермелĕх те кăлараççĕ. Çакă та лайăх: вĕсене малтанхи пахалăхĕпех çитерме тăрăшаççĕ ялсенче пурăнакансем патне. Уншăн – уйрăм тав сăмахĕ.

Хатĕрлев кантурĕ те хăйĕн ĕçне-хĕлне халăхпа тачă çыхăнса йĕркелет çуллен. Екатерина Михайловна Антонова хатĕрлевçĕ нумайранпа ăнăçлă ĕçлет ку енĕпе. Кооператив халăхран тивĕçлĕ хакпа макулатура, аш-какай, тĕрлĕ чĕртавар, çĕрулми, пахчаçимĕç, тырă çуллен сахал мар туянать, продукци туса илекенсемшĕн питĕ меллĕ ку. Кооператив хăйсене кайăк-кĕшĕкпе тивĕçтернишĕн те питĕ кăмăллă ял çыннисем. Кăçал та 10000 пуçа яхăн илсе килсе сутнă лавккасем урлă – вĕсем çăмарта тумалли çамрăк чăхсем те, бройлер чĕпписем те, пăртак çитĕнтернĕ кăвакалпа хур чĕпписем те. Ялах çитерсе панине мĕнле кăмăлламăн. Тепри-тепри икшер хутчен те туяннă. Çакăн пек тăрăшнăшăн тав тумасăр мĕнле пултăр!

Çынсен кулленхи ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерме тимленисĕр пуçне «Тăвай кооперативĕ» потребитель пĕрлешĕвĕ пулăшу ĕçĕсен пахалăхне çĕнетсе пымалли майсене те сарса пыма тăрăшать. Сăмахран, халăхра «Ял ĕçченĕ» хаçата сарас тĕлĕшпе пысăк ĕç тăвать, хăйĕн лавккисем урлă çуллен çĕр-çĕр экземпляр хаçат çитерет ял çыннисем патне, çынсем хаçат вуласа округ пурнăçне тĕплĕнрех пĕлсе тăччĕр, экономикăна вăйлатма, ялсене хăтлăх кӳме ытларах тӳпе хывччăр тесе пулăшать. Çав вăхăтрах çине тăрса татса памалли ыйтусем те çук мар. Хăйĕн строительствине инвестицисем хыватьха кооператив. Суту-илӳ çурчĕсем, складсем пысăк та хăтлă халь, лавккасем тавартан чухăн мар. Çав хушăрах хăш-пĕр ялсенчи, сăмахран, Кивĕ Пуянкассинчи, Çĕнĕ Ишпуçĕнчи, Лачкассинчи лавккасене, Тăвай ялĕнчи кафесене сутуçăсем, поварсем кирлĕ. Анчах ял çыннисем таварсăр юлмĕç тесе шантараççĕ, çитменлĕхсене пĕлеççĕ, вĕсене пĕтерсе пырĕç.

Тĕп пуянлăх, паллах, кадрсем – специалистсем, сутуçăсем, поварсем, çăкăрбулка пĕçерекенсемпе кондитерсем, хатĕрлевçĕсем, водительсем, ыттисем. Вĕсем кооператив пĕрлешĕвĕ аталансах пытăр, халăх хăйсен ĕçĕпе кăмăллă пултăр тесе куллен тата çуллен сахал мар вăй хураççĕ. Пĕтĕм тĕнчери кооперации кунĕпе сире!

**Иван ГЛАДКОВ**

# Хастарсене – округ пуçлăхĕн премийĕсем

**Управлени, производство, ăслăлăхпа пултарулăх, тĕпчев ĕçĕсенчи çитĕнӳсемшĕн конкурс çĕнтерӳçисене Тăвай муниципалитет округĕн пуçлăхĕн премийĕпе хавхалантарнă:**

Юлия Андреевна Баданована – Канашри территорисем хушшинчи медицина центрĕн Тăвайри тĕп больница филиалĕн врач-хирург кабинетĕнчи медицина сестрине;

Наталья Александровна Колоколована – Тăвай муниципалитет округĕн администрацийĕн культура, социаллă аталану тата архив ĕçĕсен пайĕн тĕп эксперт-специалистне;

Анастасия Алексеевна Мухановава – Тăвайри 2-мĕш ача сачĕн воспитательне;

Ольга Николаевна Николаевана – Тăвайри халăха социаллă пулăшу паракан центр директорĕн тивĕçĕсене пурнăçлакана.



ЭПИР ПĔРЛЕ

# Ĕçе васканă пекех...

**Амалăх ялĕнчи Культура çуртĕнче маскировка тетелĕ çыхас ĕç малалла пырать. Чун ăшшине парса ĕçлеççĕ Валентина Колотушкина, Лидияпа Надежда Ивановасем, Зинаида Тарасова, Марийăпа Любовь Воробьевасем, Эльвира Орлова. Мускавран отпуска яла килнĕ Светлана Долгова та хаваспах йышпа ĕçлеме кăмăл турĕ.**

«Нумайăн мар эпир, çапах ĕç ăнса пырать»,– терĕç ялти чи хастар кĕмĕл волонтерсем Муштаковсем, Лидия Петровнапа Николай Егорович. Çумăр витĕр те ĕçе васканă пек утаççĕ вĕсем тетел çыхакан пункта, хĕллехи вăхăтра çил-тăман та чăрмантармасть вĕсене Амур çырми урлă каçса çÿреме.

«Пархатарлă ĕç тăватпăр вĕт, вăрçи часрах пĕттĕрччĕ»,– тет пилĕк ача амăшĕ Лидия Петровна. Тĕмер хĕрĕ вăл, хăй вăхăтĕнче ялти çыхăну уйрăмĕн начальникĕнче ĕçленĕ. Тивĕçлĕ канăва тухиччен Амалăхри лавккара сутуçăра тăрăшнă. Туслă мăшăр тесе калас килет Муштаковсем çинчен. Çемье пуçĕ Николай Егорович водительте вăй хунă, халĕ те ĕçсĕр лараймасть. Тетел çыхман кунсенче пулла, çырлана каять.

Çывхарса килекен утă уйăхĕн 8-мĕшĕнчи юратупа шанчăклăх кунĕпе саламлатпăр хастар мăшăра. Ачăрсемпе, мăнукăрсемпе савăнса пурăнмашкăн, кашни куна ырăпа кĕтсе илмешкĕн Турри сывлăх патăрччĕ сире.

**Людмила ИВАНОВА, волонтер. Амалăх ялĕ**



# Астăвăм аллейи уçнă

**Иртнĕ эрнере Йăнтăрчă ялĕнче ятарлă çар операцине хутшăнакан ентешсене халалласа асăну аллейи уçнă. Çак пулăм Тăван çĕршыва хÿтĕлесе хăйсен тивĕçне чыслăн пурнăçланă паттăрсене асра тытмалли, хисеплемелли символ пулса тăрĕ.**

Çак ялти СВОра пуç хунă Александр Салминăн ашшĕпе амăшĕ Светлана Артикбаевнапа Силантий Маркелович тата пиччĕшĕ Сергей Борисовичăн пысăк çухатăва пусарма тата ăна ĕмĕр асра хăварма хăйсенчен аякра мар çырма пуçĕнче йывăçсем лартнă. Салтакăн çывăх çыннисем сĕтел тата сак вырнаçтарнă.

Унтан асăну аллейи тăвас шухăш çуралнă. Çакăн çинчен Йăнтăрчă ял территорийĕн пуçлăхне Александр Карсакова пĕлтернĕ. Сăваплă ĕçе ял çыннисене явăçтарса, çак вырăна хăтлăх кÿрес ĕçсене «Пуçару бюджечĕн программипе» килĕшÿллĕн пурнăçлама йышăннă. Тăвай муниципалитет округĕн пуçлăхĕн çумĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Ирина Семенова пĕлтерĕшлĕ пулăма хутшăннă май сăмах каланă, çĕршыв патриочĕсен паттăрла тĕслĕхĕсене асра тытăпăр, вĕсем çамрăксенче патриотизм туйăмне вăратчăр, тенĕ. Ырă пуçарушăн паттăр салтакăн çывăх çыннисене тав тунă.

Кăçал астăвăм паркĕ тавра карта тытса çаврăннă. Йывăç хунавĕсем те хушăнса пыраççĕ унта. Часах вĕсем вăй илсе çÿлелле кармашĕç, Александр пек çĕршыв хÿтĕлевçисене манма памĕç, аса илтерсе тăрĕç.

**Раиса ШУМОВА**



ÇЫРĂНТАРУ–2025

# Пĕрре те çырăнмасăр юлмастпăр,терĕ

**Тăвайри «Россельхозбанк» çурчĕ умĕнче ăнсăртран тенĕ пек Енĕш Нăрвашра пурăнакан Василий Петрович Кузьмина тĕл пултăм. Юрист вăл, хăй вăхăтĕнче следовательте, Тăвай районĕн халăх судйинче, унтан прокуратурăра, хăйсен колхозĕнче ĕçлерĕ. Вăл сăн-питрен унчченхи пекех аван курăннипе кăмăллă юлтăм. Алă тытрăмăр пĕр-пĕрне.**

– Салам, Иван Иванович!– терĕ пырса çитиччен. – Эсир çырнисене, сирĕн статйăрсене вуласах тăратăп.

«Ял ĕçченне» пĕрре те çырăнмасăр юлмаççĕ иккен вĕсем.

– Райпо лавкки урлă илсе тăратăр-и? – кăсăклантăм эпĕ.

– Çук, почта урлах çырăнса илетпĕр. Ун пек хаçата килех çитерсе параççĕ. «Ял ĕçченĕсĕр» пуçне, «Аргументы и факты» хаçат та, ыттине те илсе тăратпăр – пурĕ тăват-пилĕк издани. Ачасем те, хуларан килсен-тусан, пирваях район хаçатне алла илеççĕ. Вырăнти хыпарсем яланах çывăхрах ĕнтĕ, кăсăклăрах та,– терĕ Василий Петрович. Ачисем тенĕрен, вĕсем Кузьминсен пиллĕкĕн. Вăталăх ывăлĕ Александр Васильевич вара ашшĕ çулĕпе кайнă, пурнăçра юрист профессине суйласа илнĕ, Ыттисем те аслă пĕлÿллĕ, харпăр хăй кăмăллакан профессисене алла илнĕ. Тăваттăшĕ çемье те çавăрнă.

Василий Петровичăн мăшăрне те – Роза Викторовнана – лайăх пĕлетĕп. Вăл чылай хушă «Красная Чувашия» колхозра зоотехникре, кайран Енĕш Нăрваш ял поселенийĕн пуçлăхĕнче ĕçлерĕ. Халĕ Василий Петрович пекех тивĕçлĕ канура, хуçалăх тытаççĕ.

**Иван ГЛАДКОВ**

# Укçа-тенкĕ тытма вĕренесси çемьерен пуçланать

**Тăвайри Алексей Владимировичпа Наталья Юрьевна Федоровсемпе вĕсен хĕрĕ Аня Пĕтĕм Раççейри II çемье фестивалĕн регион тапхăрне хутшăннă. Ăна укçа-тенкĕне перекетлĕ тытма вĕрентессине, инвестицисем хывма вĕренес ĕçе халалланă. Финанс пĕлĕвне ÿстерни ултавçăсенчен хăтăлма та пулăшать. Республикăри муниципалитетсенчен 22 çемье хăйсен пултарулăхне кăтартнă фестивальте.**




– Хамăрăн пĕлĕве пилĕк тĕрлĕ тупăшура тĕрĕслерĕмĕр. Тĕслĕхрен, «Накопления и накопители» ĕçлĕ вăйăра, «Инвестиции для всех» квизра, «Финансовая находчивость» квестра. «Интерактивлă калькулятор» мастер-класра укçа-тенкĕне хаклассипе çыхăннă ĕç-хĕлре сахал мар балл пухрăмăр. Ĕçлесе илнĕ балсене ятарлă перекет кĕнекинче шута илсе пычĕç,– терĕ çемье пуçĕ Алексей Владимирович. Вăл – округ администрацийĕн ятарлă сектор заведующийĕ, мăшăрĕ – Тăвайри ЦСОН ĕçченĕ.

Ăмăртăвăн компетентлă жюринче ЧР финанс министрĕ Михаил Ноздряков (председатель), Росгосстрах ПАОн республикăри филиалĕн директорĕ Алексей Пирожков, «РБК» юридици компани директорĕ Александр Ермаков, финанс пĕлÿлĕхĕн Республикăри центрĕн ертÿçи Дмитрий Щепелев тата ыттисем пулнă.

Çак йыш хăех паянхи кун халăха финанс пĕлĕвĕ парасси пĕлтерĕшлĕ ыйтусен шутĕнче пулнине çирĕплетет.

Муниципалитет тапхăрĕн çĕнтерÿçисем, Федоровсем, Канашра иртнĕ фестивальте округ чысне ăнăçлă хÿтĕленĕ, сертификата тивĕçнĕ, «Чăваш Ен» телеканала интервью панă.

**Раиса ВАСИЛЬЕВА**

# Пушартан сыхланса

**Çын пурнăçĕнче хăрушсăрлăх йĕркине пăхăнни питĕ пĕлтерĕшлĕ. Апла пулин те, статистика пурăнмалли секторта пушарсем çав-çавах нумай пулнине, вутçулăмра çынсем те вилнине çирĕплетсе парать.**

Çак инкексем ан пулччăр тесе округ администрацийĕн пай начальникĕ Алексей Федоров, Чутей территори пайĕн тĕп специалист-эксперчĕ Валентина Куприянова тата Тăвай округĕнчи ОНД тата ПР начальникĕн тивĕçĕсене вăхăтлăха пурнăçлакан Артемий Васильев Чутей ял халăхĕпе тĕл пулса пурăнмалли секторта пушар хăрушсăрлăхĕн правилисене пăхăнас ыйтупа профилактика калаçăвĕ сем иртттернĕ, пушарпа çăлав службин телефон номерне – 101 – аса илтернĕ, вут-çулăма сÿнтермелли хатĕрсемпе мĕнле усă курмаллине каласа ăнлантарнă, пушар хăрушсăрлăхĕн требованийĕсене пăхăнмалли памяткăсем панă.



# Манăн ял - манăн тăван кил



Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçа кĕрсе пырать

# Енĕш Нăрваш территори уйрăмĕ çĕнелсех пырать




Акатуйри хăна çурчĕ

**Тăван кил, тăван ял пирĕншĕн пуриншĕн те питĕ çывăх. Ял çыннисем тăван енĕн сăн-сăпатне улăштарма, инфраструктурăна çĕнетсе пыма, кирлĕ объектсене кун пама, ытти тĕллевсене вăй çитнĕ таран пурнăçа кĕртсе пыма тăрăшаççĕ. Çакă пĕлтерĕшлĕ: юлашки çулсенче пурăнмалли çурт-йĕр, çулсем, социаллă объектсем тăвас тата юсас, ялсен инфраструктурине аталантарас ĕçсенче палăрмаллах улшăнусем пулса иртрĕç. Тăвай муниципалитет округĕнчи ялсенче те çĕнĕлĕхсем сулмаклăрах, курăмлăрах пулса пыраççĕ. Хăтлăрах условисенче пурăнма пуçларĕç çынсем.**

**«Эпир кил-çуртсем таврашне тирпей-илем кĕртмелли программăна пурнăçлама тытăнтăмăр ĕнтĕ. Тепĕр темиçе çул чăнласах унпа ĕçлеме тĕллев лартатпăр. Паян тунă ĕçсем пурсăмăра та савăнтараççĕ. Халăха хăй пурăнакан вырăнсенче ĕçлеме хăнăхтаратпăр. Пĕрле тунă ĕç паха. Çынсене хăрушсăрлăх тивĕçтертĕр, тавралăхра йĕрке хуçалантăр тесен, мĕнпур ĕçе комплекслă тума тăрăшмалла. Тавралăх çак кунсенче ырă енне улшăнассине пурсăмăр та ĕненетпĕр»,– тет Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Олег Николаев.**



Александр Германович Федоров

Енĕш Нăрваш – Чăваш Енри пысăк ялсенчен пĕри.

Икĕ ял кĕрет территори уйрăмне. Енĕш Нăрвашра (1185 çын), Кушкăра (150) – пурĕ 1335 çын пурăнать. 667 килхуçалăх шутланать пысăк ялĕнче, пурăнман кил-çурт – 230, Кушкăра 134 çурт-йĕртен 40-шĕ – çынсăр.

Ялсен пурнăçне хăтлăлатассипе асăннă тăрăхра мал ĕмĕтпе ĕçлеççĕ çынсем.

«Культурăна аталантарасси» патшалăх программипе килĕшӳллĕн 2022 çулта Енĕш Нăрвашри культура çуртне тĕпрен юсас ĕçсем пынă, пĕтĕмĕшле смета хакĕ 20568 пин тенкĕпе танлашнă.

«Сельмаш Строй» ОООпа ĕçсене пурнăçа кĕртме муниципаллă килĕшӳ тунă.

Тăвайри муниципалитет округĕ палăртнă объектăн иккĕмĕш тапхăрне 2023 çулта вĕçленĕ.

«Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ» хисеплĕ ятпа чысланă Зоя Ивановна Васильевана юрраташша юратакан ял çыннисем питĕ хисеплеççĕ. Çĕнетнĕ культура çуртĕнче ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ Михаил Павлович Федоров та вăй хума пуçланă. Ытти кадрсем те хăйсен тивĕçĕсене аван пурнăçлаççĕ.

Чăваш халăхне çутта кăлараканĕ Иван Яковлев уçнă çуртра историпе асăну музейĕ вырнаçнă. Ольга Ильинична Меркурьева пурнăçланă унти ĕçсене малтан. Çурта темиçе çул каялла тĕпрен юсарĕç, картине те çĕнетрĕç. Халăх ятне панă музейре педагогика ĕçĕн ветеранĕ Владимир Васильевич Петров заведующире ĕçлеме пуçласан чылай çĕнĕлĕх пулнă. Халĕ музейре Милана Николаевна Васильева тăрăшать.

Патшалăх программисемпе усă курнипе Енĕш Нăрваш территори уйрăмĕнче ытти тĕрлĕ ĕçсем пурнăçланаççĕ. Çул-йĕр, шыв, çутă ыйтăвĕсем – халăхшăн чи пĕлтерĕшлисем.

Шыв – пурнăç çăлкуçĕ. Хуçалăхра тĕрлĕ çĕрте усă курма, пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерме те кирлĕ вăл. Ялсен сăнсăпачĕ улшăнса пыни укăлчаран кĕрсенех палăрать. Урамсем хытă сийлĕ çул-йĕрпе йĕркеленеççĕ, общественлла объектсен çĕнелнĕ фасачĕсем кăмăл-туйăма çĕклеççĕ, вылямалли лапамсенче каçченех ача-пăча сасси илтĕнет.

Ял территорийĕнче шкул, ача сачĕ, 8 магазин, культура çурчĕ, библиотека, музей, виçĕ хресчен-фермер хуçалăхĕ, почта çыхăнăвĕн уйрăмĕ, перекет банкĕн филиалĕ, чиркӳ ĕçлеççĕ.

Юлашки çулсенче вырăнти пуçарусене тĕпе хурса обществăлла инфраструктура аталанăвĕн 19 проектне ĕçе кĕртнĕ.

Ялта 20 контейнер лапамĕ тунă, видеосăнавăн 10 камерине вырнаçтарнă. Электроэнергие перекетлекен 50 хунар çакнă урамсенчи юпасем çине. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче вилнисене асăнса Кушкăра та палăк лартнă.

Енĕш Нăрвашри Московская тата Школьная урамсенче каçсерен çутатмалли электролини хывнă. Ача-пăча вылямалли лапамсем валли оборудованисем туяннă. Паварская тата Данилов ячĕллĕ урамсенчи çулсене вак чул сарса якатнă.

– 2021 çулта Енĕш Нăрвашра 25 кубла метр калăпăшлă шыв уçлакан башня лартнă. Кушкăри кивĕ башньăна çĕннипе улăштарнă. 2022 çулта 7 проект ĕçе кĕртнĕ. Культура çурчĕ валли газпа ĕçлекен кăмакасем туяннă, пĕвене тасатнă. Хумма Çеменĕ, Николаев ячĕллĕ урамсене, Зеленăй тăкăрлăка вак чул сарса хытарнă. Кушкăри Интернациональная, Енĕш Нăрвашри Мирная тата Сверчков ячĕллĕ урамсене йĕркене кĕртнĕ,– юлашки çулсенчи хăйсен ĕç-хĕлне кĕскен палăртса хăварчĕç ял ĕçченĕсем.



Çулсем çĕнелеççĕ



Масар çурчĕ

2023 çулта та Енĕш Нăрваш тăрăхĕнче 7 пуçару проектне пурнăçланă. Шкулта чӳрече анисене 87648 тенкĕлĕх çĕнетнĕ, шкулччченхи учреждени архитектурăн пĕчĕк формисене 505000 тенкĕлĕх тунă.

Западная урамра – 38000 тенкĕлĕх, Канашская – Речная ятлинче 570000 тенкĕлĕх, Николаев урамĕнче 788061 тенкĕлĕх вак чул сарнă, Нĕркей çăлкуçа 849254 тенкĕлĕх йĕркене кĕртнĕ. Шыв уçлакан башньăна 1761235 тенкĕлĕх юсанă, культура çуртне – 5849204,55 тенкĕлĕх. Лесная тата Спиридонов ячĕллĕ урамсенче те çĕнетӳ ĕçĕсем пулнă. 2024 çулта асăннă тăрăхра пилĕк проект пурнăçа кĕртнĕ.

Кăçал Енĕш Нăрвашра вунă проект пурнăçлама палăртнă. Шкул автобусĕ валли гаража çĕнетеççĕ. Мирная урамри обществăлла тараса та улшăну кĕтет. Ялти культура çуртĕнче Вера Кузьминична Кузьмина паллă артисткăна халалланă кĕтес вырнаçтарĕç. Комаров, Чапаев ячĕсемлĕ урамсенчи çулсене çĕнетеççĕ. Ялти масар çуртне туса пĕтереççĕ. Енĕш Нăрвашри Дальная, Чувашская, Максимов ячĕллĕ урамсенчи çулсене вĕтĕ чул сарса якатассине малалла тăсаççĕ. Çулсем çинчи шыв юххисене йĕркелемелле, шкул çурчĕн фасадне юсас ĕçсем пуçланĕç.

Кăçал Енĕш Нăрвашри территори уйрăмĕн ĕçĕсене Александр Германович Федоров йĕркелесе пыма пуçăннă. Чулхула академийĕн Шупашкарти филиалĕнче заочно майпа вĕреннĕ вăл. Çав хушăра 8 çул право служибинче тăнă. Тăрмăш каччи унтан тăван района таврăннă, право йĕркине сыхлассине малалла тăснă. 28 çул иртнĕ унтанпа. Чеченри вĕри «точкăсенче» пулнă, награда та пур. Ертсе пыракан тĕрлĕ должноçри тивĕçĕсем çине яваплăхпа пăхнă. Пĕр кăлтăксăр службăшăн I-III степеньсемлĕ медальсемпе чысланă Александр Германовича. «Ĕç ветеранĕ» хисеплĕ ят пур унăн. Юлашки çулсенче Шупашкарта шалти ĕçсен управленийĕнче вăй хунă. Унпа пĕрле Любовь Алексеевна Николаева тăрăшать халь ял территорийĕн уйрăмĕнче.

– «Манăн ял, манăн тăван кил» тĕллевĕмĕре тĕпе хурса пирĕн те Енĕш Нăрваш ял тăрăхне илем кӳрес тесе вăй хурса ĕçлемелле,– тет ертӳçĕ хăйĕн тивĕçĕсене тимлесе тытăннă май.

Иртнĕ çулсенче «Дортехпроект» ООО тунă смета документчĕсем тăрăх Енĕш Нăрвашри Токсин ячĕллĕ урамра çĕнĕ кĕпер хывнă. Яла икĕ пая пайланă кĕпере çĕнетнĕ хыççăн енĕшнăрвашсен тепĕр проблемине татса пама пулăшнă «Хăрушсăрлăхлă паха çулсем» наци проекчĕ çапла.

«Енĕш Нăрваш халăхĕ тăван тăрăха илем кĕртес ĕçе хастар хутшăнать. Асăннă ял хăйĕн ĕлккенлĕхĕпе палăрать. Эпир ăна пурте пĕрле тата хитререх тăвăпăр»,– хăйĕн шухăшне пĕтĕмлетет территори уйрăмĕн начальникĕ Александр Федоров.

Ял пурнăçĕ çăмăл мар. Пысăкрах проблемăсене вара халăх шухăш-кăмăлне шута илсе пурнăçлаççĕ. Ĕçсен ăнăçлăхĕ, паллах, халăхпа, депутатсемпе, активистсемпе пĕр чĕлхе тупса ĕçлеме пĕлнинчен нумай килет. Яла çамрăклатассипе унăн хутлăхне хăтлăрах, илемлĕрех, тирпейлĕрех тăвассине тĕп тимлĕхе хума тĕв тăвать хăйĕн ĕçĕнче Александр Германович.

Тĕрлĕ проектсем хатĕрлесе республика шайĕнчи конкурссем витĕр те ăнăçлă тухаççĕ Енĕш Нăрваш ялĕнче пурăнакансем.

Ырă тĕслĕхсене татах та илсе кăтартма пулать. Пурте вĕсем ку тăрăхра маттур та харсăр çынсем пурăннипе, ял аталанăвĕшĕн, çамрăксен пуласлăхĕшĕн тăрăшнипе пулса пыраççĕ.

Акă, акатуй енĕшнăрвашсемшĕн те чăннипех те пысăк уяв пулнă. Тĕрлĕ площадкăра спорт ăмăртăвĕсемпе киленнĕ округри акатуя килнисем.

Спартакиадăра енĕшнăрвашсем иккĕмĕш вырăна тухнă.

**Иван ГЛАДКОВ хатĕрленĕ**

**Галина Степанова, вĕрентекен:**

*– Енĕш Нăрваш ялĕ пултаруллă искусство çыннисемпе пуян. Вера Кузьмина, Хумма Çеменĕ, Моисей Спиридонов, Никита Сверчков, Алексей Майраслов...Çак списока малалла та тăсма пулать. Вĕсем Тăвай тата Чăваш енĕмĕр чысне çӳле çĕкленĕ.*

*Паянхи куна илсен, Зоя Васильева пек чуна парса ĕçлекенсем çинче тытăнса тăрать ял культурин аталанăвĕ. Вăл ăсталăхĕпе кулленхи пурнăçа илемлетет. Енĕш Нăрвашри халăх театрне илес пулсан, ертӳçĕ тилхепине Зоя Ивановна шанчăклăн та çирĕппĕн тытса пырать.*

*Вăл режиссер, юрăç кăна мар, çыравçă та. Хăй кĕвĕленĕ юррисемпе пĕрре кăна мар конкурссен лауреачĕ пулнă. «Килтĕм хăнана», «Эс те, эс те ман тăван», «Эй, хей çумăр çу», «Килсе курма васкарĕ», «Кума» тата ытти юррисем Чăваш радиовĕпе те, телевиденипе те янăраççĕ, чун-чĕрене хускатаççĕ, хавхалантараççĕ.*

# Шкулпа сывпуллашу уявĕ

**Шкул вĕренсе тухакансен балĕ – çамрăклăхпа хитрелĕх, пуласлăхпа шанчăклăх, çутă ĕмĕт-шухăшсемпе тĕллевсен уявĕ. Ку вăл пурин праçникĕ те: вĕренекенсемпе вĕрентекенсен те, ашшĕ-амăшĕн те.**

Йăлана кĕнĕ йĕркепе Тăвай округĕнче те 2025 çулта шкултан вĕренсе тухакансене савăнăçлăн чысланă – асăннă кăларăм балĕ чи массăллă тата пурте кĕтнĕ праçник пулса тăнă. Ку уяв ашшĕпе-амăшĕшĕн те хаклă, мĕншĕн тесен вĕсем 11 çул хушши ачин пурнăçĕпе пурăннă, унăн çитĕнĕвĕсемпе çитменлĕхĕсемшĕн пăлханнă, савăннă тата пăшăрханнă. Вĕрентекенсемшĕн те хаклă, мĕншĕн тесен вĕсем кăна çĕнтерӳсене мĕнле туптанине тата йывăрлăхсене епле çĕнтернине пĕлеççĕ. Паллах, вĕренсе тухакансемшĕн хăйсемшĕн те питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ тата хаклă ку уяв – вĕт вĕсем пурнăçăн анлă çулĕ çине тухмалли пĕрремĕш тапхăра çĕнсе илнĕ.

Шкул пĕтернĕ ятпа вĕренсе тухакансене тата бала пухăннисене Тăвай муниципалитет округĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов, округ администрацийĕн пуçлăхĕн заместителĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан – вĕрентӳ пайĕн начальникĕ Ирина Семенова тата Мускаври политехника институчĕн Шупашкарти филиалĕн вĕрентӳпе методика пайĕн начальникĕ Ирина Казарина саламланă, шкул пĕтернисене пурнăçра ăнăçу, тĕрĕс йышăнусем тума, тăван ене квалификациллĕ специалистсем пулса таврăнма ырă суннă.

Шкул пĕтернисенчен 6-шне «Вĕренӳри уйрăмах пысăк çитĕнӳсемшĕн» медальпе, чылайăшне администрацин тата вĕрентӳ пайĕн грамотисемпе чысланă.

Сăмах илсе вĕрентекенсене, ашшĕ-амăшне тата хăнасене Тăвайри вăтам шкултан вĕренсе тухакан Артем Яковлев тав сăмахĕ калаṅă.

Ашшĕ-амăшĕ ячĕпе Надежда Максимова саламланă уява пухăннисене.

Юлашкинчен ăсату вальсĕнче илемлĕн çаврăннă шкултан вĕренсе тухакансем хăйсен юратнă вĕрентекенĕсемпе, ашшĕ-амăшĕпе, пĕрле вĕреннĕ тантăшĕсемпе, тăван шкул ăшшине ĕмĕрлĕхе упраса хăварма тăрăшса.

Çапла вара 11 çул пĕр самант пек вĕçсе иртнĕ. Çак кунран пуçласа шкул пĕтернĕ çамрăксем харпăр хăй тĕллĕн йышăнусем тума тата хăйсен пурнăçне хăйсем йĕркелеме тытăнĕç. Ăнăçусем вĕсене пурне те!

ÇУЛЛАХИ КАНИКУЛ

# Кану кунĕсем аван иртрĕç

**Николай Афанасьев ячĕллĕ Тĕмерти шкулта ачасен çуллахи канăвне «Солнечные лучики» тата «Экокрай» лагерьсенче йĕркелерĕç.**

40 ача канса вăй пухрĕ лагерьте. Режима пăхăнса куллен ирхи зарядка, тĕрлĕ мероприятисем хатĕрлерĕç В.Н.Чумышева, Е.И.Романова, Т.Г.Яковлева тата В.И.Сучкова воспитательсем. М.Роштова тата Н.Воробьева поварсем ирхи тата кăнтăрлахи вĕри апатсемпе сăйларĕç. Спорт вăййисемпе ăмăртусене Б.А.Емельянов йĕркелесе тата хавхалантарса пычĕ. Кашни эрнере бассейна шыва кĕме çӳрерĕç, Тăвайĕнче иртнĕ спартакиада вăййисене хутшăнса аван çитĕнӳсем кăтартрĕç вĕренекенсем. Шкул умĕнчи клумбăсене тирпейлесех тăма тăрăшрĕç ачасемпе воспитательсем. Çуллахи каникулта шыв хĕрринче инкек ан пултăр тесен мĕнле тытмалли, пушар хăрушсăрлăхĕ, çул çинче асăрханулла пулмалли çинчен темиçе хутчен те калаçнă.

Мĕнле кăна интереслĕ ĕçхĕл иртмерĕ пулĕ çĕртме уйăхĕнчи 3 эрне хушшинче. Республика кунĕ умĕн Шупашкара экскурсие кайса «Лакрей вăрманĕ» паркра канни те асрах-ха. Тĕрлĕ аттракционсемпе ярăнса кăмăлĕсене хăпартрĕç канакансем. Çывăхри ялсене шкул автобусĕпе çитсе палăксем умне чечексем хучĕç. Чутей, Ишпуç, Амалăх тата Мучар ялĕсенче çуралса ӳснĕ паллă çынсем çинчен ытларах пĕлме май пачĕç çакăн пек çулçӳревсем.

Акă, Мучар ялĕ Совет Союзĕн Геройне Петр Бухтулова çитĕнтернĕ. Çĕнĕишпуçсем Шупашкарти çăкăр завочĕн директорĕпе Елена Бадаевапа тивĕçлипе мухтанаççĕ. Тĕнчипех пĕлеççĕ Чутей ялĕн хисеплĕ гражданинне, Чăваш АССР тата РФ искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченне Морис Яклашкин дирижера. Амалăх ялĕнчи Петр Федоров композитор, хор дирижерĕ, педагог пулнă.

Чутей ялĕнчи чиркӳре пулса Леонид аттепе тĕл пулчĕç. Чиркӳ чанĕ юрланине итлерĕç тата сиплĕ шыва тутанса пăхрĕç.

Сисĕнмесĕрех вĕçленчĕ лагерьти 21 кун. Шкул автобусĕпе куллен лагере илсе çӳренĕ В.И.Феклин водителе, лагерьте канма кирлĕ условисем туса панăшăн округ администрацине чунтанах тав тăваççĕ шкул ачисемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕ.

Çапла, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Олег Николаевăн «Чăваш Енри хаваслă çу кунĕсем» социаллă проекчĕ ачасен канăвне маларах палăртса вăхăта усăллă ирттерме, тăван тăрăхра нумай çĕннине пĕлме, республикăпа паллашма майсем усрĕ.

**Светлана ШАШКОВА, лагерь начальникĕ**



П.Х.Бухтулова халалланă стенд умĕнче



# Ăсататпăр салтака сире...

**Тушкилти культура çуртĕнче çамрăк призывника Александр Александрова çара савăнăçлă лару-тăрура ăсатнă.**

Ял территори уйрăмĕн начальникĕ Александр Трофимов кашни арçыннăн Тăван çĕршыв хӳтĕлевçи пулса службăра тăмалли тивĕç çинчен каланă. Пулас салтака çирĕплĕх, паттăрлăх, çар наукине ăнăçлă алла илме суннă, асăнмалăх парне панă.

Ĕлĕкрен пыракан йăла-йĕркепе салтак юррисем янăранă, кĕвĕсенче килшĕн тунсăхлани, хамăр вăя, хăвăрт тĕл пуласса шанни палăрнă. Ăсату каçĕ клуба Александрăн нумай тустăванне пухнă. Купăс каласа ташланă, юрланă. Тухса калаçакансем тĕрĕс-тĕкел таврăнма пил панă каччăна.

«Маларах кăна ял территорийĕн уйрăмĕнчен Константин Николаева, Борис Борисовпа Ростислав Иванова çар службине ăсатрăмăр. Каймаллисем татах та пур-ха»,– терĕ Александр Трофимов.

Тĕмерти культура çуртĕнче ялйышпа Никита Яковлева та ăнăçу, мирлĕ тӳпе сунса ăсатнă салтака.

Алексейпе Лариса Яковлевсен аслă ывăлĕ Родион вара халь-халь салтакран килмелле. Мускав облаçĕнче службăра тăнă вăл. Виçĕ ывăлтан кĕçĕнни Егор шкулта пĕлӳ пухать.

**Раиса ВАСИЛЬЕВА**



# Çĕнĕ купол вырнаçтарнă

**Июнĕн 25-мĕшĕ Чутей çыннисемшĕн паллă кун пулса юлĕ. Христос çуралнине халалланă храм тăррине çĕнĕ купол вырнаçтарнă. Канаш епархине кĕрекен Тăвай округĕнчи Благочиннăй Александр атте, Георгий атте (Тăвай чиркĕвĕ), Чутейпе Тăрмăш чиркĕвĕсен настоятелĕ Леонид Бараматов иерей, Патăрьел тăрăхĕнчи Тойси ялĕнчи Николай атте, Александр иподъякон, Тăвай округĕн пуçлăхĕ Анатолий Ломоносов, Чутей территори уйрăмĕн начальникĕ Дмитрий Белов хутшăннă унта. Çак кун уяв кĕлли те иртнĕ.**

Священниксем куполпа храма тасалăх тивлечĕ кӳнĕ, кунта килнисене пурне те пилленĕ.

Çуллахи хĕвел çутинче йăлтăртатакан ылтăнланă купол ял çыннисемшĕн ăс-хакăлпа шанчăк чĕрĕлнин символĕ пулса тăчĕ.

Çак кунсенче илемлĕ чиркĕве Николай Афанасьев ячĕллĕ Тĕмер шкулĕ çумĕнчи лагерь воспитанникĕсем килсе курнă. Тĕлпулура Леонид атте ачасене чиркӳ историйĕпе паллаштарнă, сăваплă япаласем, ял пурнăçĕнче чиркӳн пĕлтерĕшĕ çинчен каласа панă. Ачасем пачăшкăн кашни сăмахне тимлĕн ăша хывса итленĕ.

